# Аннотация к рабочей программе по «Родному (чувашскому) языку» в 1-4 классах

Чăваш чĕлхи программине хатĕрленĕ чух М.К. Волков, Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева, О.И. Печников, А.Р.Кульева çырса хатĕрленĕ «Тăван чĕлхепе литература вулавĕн тĕслĕх программине: чăваш шкулĕн 1-4 класĕсем валли. Вĕрентӳ хатĕрĕ: А.А. Ермошкина «Чăваш азбуки» Чăваш чĕлхи – Л. П. Сергеев, Т. В. Артемьева, А. Р. Кульева, Ю. С. Семенов. Чăваш чĕлхи. 2-4 - мĕш классем.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене (тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шулта çакăн пек пысăк та пархатарлă **тĕллевсене** пурнăçламалла:

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

- ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

- ачасен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе асне, асăмлас хевтине аталантармалла;

- вĕренӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

- тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, пĕлӳпе пурнăç тĕслĕхĕсен çăл куçĕпе – кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

Программăри вĕренӳ материалĕпе вĕрентӳ меслечĕсем ачасене çирĕп пĕлӳсемпе ăслайсем, кирлĕ хăнăхусем паччăр тесен дидактикăн тĕп принципĕсене асра тытса вĕренӳ ăнланулăхĕпе кăсăклăхне, çыхăнулăхĕпе тĕллевлĕхне ялан пурнăçласа пымалла.

**Предметăн вĕрентӳ планĕнчи вырăнĕ.** Çирĕплетнĕ вĕренӳ планĕ тăрăх чăваш чĕлхине вĕрентме пурĕ 305 сехет: 1-мĕш класра – 33 сехет, эрнере 1 сехет уйăрнă; 2- 3 мĕш классенче 102 сехет, эрнере 3 сехет уйăрнă, 4-мĕш класра – 68 сехет, эрнере 2 сехет уйăрнă.

**«Чăваш чĕлхи» предметăн пуçламăш классенче вĕренмелли содержанийĕ**

1. *Чĕлхе пĕлĕвĕн терминĕсемпе* паллаштарасси:

1) *Сасăсемпе сас паллисем.* Сасăсем усă тата хупă, хытă тата çемçе, янăравлă тата янăравсăр пулнине палăртма вĕренеççĕ, сыпăк, пусăм ăнлавсемпе паллашаççĕ, схемăпа усă курса сăмахсен сасăпа сас палли тытăмне тишкереççĕ.

2) *Сăмах.* Чĕлхемĕрти сăмахсем вăл е ку япалана пĕлтернине, вĕсен ĕçне т. ыт. те палăртнине, пĕлтерĕшĕпе çывăх е хире-хирĕç пулнине, предложенире, текстра сăмахпа темиçе пĕлтерĕшпе усă курма май пурине ачасе чĕлхе теорине тӳррĕн вĕренсе мар, тĕрлĕ хăнăхтару, сăнавсем тунă май куç кĕрет курмалла.

3) *Предложени.* Кĕçĕн классенче вĕренекенсен: 1) предложени пуплевĕн тĕллевне кура калуллă, ыйтуллă е хистевлĕ (хушуллă) пулнине, ăна мĕнле каланине кура – кăшкăруллă е кăшкăрусăр пулни çинчен; 2) предложени членĕсем çинчен; 3) предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çинчен; 4) предложении сăмах майлашăвĕсенчен тăни çинчен пĕлмелле.

4) *Текст.* Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текст ячĕ. Текст теми, тытăмĕ, пуçламăшĕ, тĕп пайĕ, вĕçĕ. Абзац. Текст тĕсĕсем, калав, сăнлав, уйлав.

2. *Çыхăнуллă пуплев.* Çыхăнуллă пуплев хăнăхтарăвĕсем кашни урокрах тĕп вырăнта пулмалла. Вĕсене текста вулассипе, тăнлассипе çыхăнтармалла, вĕсемпе пĕрлех текст тăвасси те, ăна çырасси те кашни класрах тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла.

3. Ăславлă (творчествăллă) çыру урокĕсем. Вĕсене 2-мĕш класран пуçласа икĕ эрнере пĕрре ирттермелле. Ăслав çыру урокĕсем чĕлхе урокĕсемпе тачă çыхăнса тăмалла.

4. *Çырма вĕрентесси. Тĕрĕс те илемлĕ çырасси.* Таса та илемлĕ çырма вĕрентме программăра ятарлă уроксем палăртман. Ку ĕçе тăван чĕлхе урокĕсенче куллен туса пымалла.

5. *Ачасен пĕлĕвне тĕрĕслесси.* Программăн кашни пайĕнче палăртнă материала мĕнле вĕренсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе хакласа тăмалла. Тăван чĕлхе урокĕсенче ирттермелли çыру ĕçĕсем шутне пуçламăш классенче çаксем кĕреççĕ: çырса илни, диктантсем (ăнлантару, асăрхаттару, курав, ăслав, тĕрĕслев, сăмах диктанчĕсем т. ыт. те), изложенисемпе сочиненисем.